27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
4
ЮНКУН
196(6691) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе комбайнерсене, машинистсемпе механиксене, агрономсемпе зоотехниксене, ветеринари врачĕсене, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене

Саратов облаçĕнчи Воскресенски районри Калинин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа XXVII çул тултарас кун çывхарса килет. Çав куна эпир совет халăхĕ фронтра та, тылра та историллĕ çĕнтерÿсем тунă тапхăрта кĕтсе илетпĕр.

Хĕрлĕ Çарăн геройла дивизийĕсемпе пирĕн союзниксен çарĕсем фашистла тискер кайăкăн шăтăкĕ патне çывăхах пырса çитрĕç. Татăклă тавăру сехечĕ çывхарса килет. Эпир ылханлă тăшмана пуçĕпех те татăклăнах çĕнтерес кун çывхарса çитет.

Совет тылĕ хăйĕн паттăрла ĕçĕпе фронтран кая юлмасть. Ялхуçалăх работникĕсем, кăçалхи çул вăйлă тырпул туса илсе, ăна пухса кĕртес ĕçе вĕçлесе пыраççĕ.

Çак аслă ĕçе пирĕн колхоз та хăйĕн вăйне хунине туйса тăма кăмăллă та савăнăçлă. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, эпир кăçалхи çул, пирĕн патра çанталăк типĕ тăчĕ пулин те, тĕштырăсем кашни гектартан 70-шер пăт, вăрлăх участокĕсенче вара 100-шер пăт çитĕнтерсе пухса илтĕмĕр.

Пирĕн колхозри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем пысăк çитĕнÿсем турĕç. Колхозăн хальхи вăхăтра майракаллă шултăра выльăхсем 258 пуç, сурăхсем 963 пуç, сыснасем 110 пуç пур. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1944 çулхи планне майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 110 процент, сурăхсем енĕпе 114 процент, сыснасем енĕпе 200 процент тултарнă. Пĕлтĕр колхозра 60 лаша пулнă пулсан, халĕ пирĕн 71 лаша пур. Эпир 100 лаша вырнаçмалăх çĕнĕ вите туса çитеретпĕр.

Выльăхсем валли шултăра апатсем пухмалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă, пурĕ 1600 тонна пухса хатĕрленĕ. Ферма çумĕнчи участок çинчен 480 центнер кавăн, 400 центнер çĕрулмипе кăшман пухса кĕртнĕ. Хатĕрленĕ апат-çимĕçсенчен çуррине фермăсем патне турттарса хунă. Колхозпа колхозниксен мĕнпур выльăх-чĕрлĕхĕ валли хĕллехи вăхăтра тăрантармалăх çителĕклĕ апат-çимĕç хатĕрленĕ.

Хĕрлĕ Çарпа халăха—апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар парса тăрассине вăйлатас тесе, эпир государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хамăрăн пур обязательствăсене те срокчен тултарма тăрăшатпăр.

Государствăна тыра памалли плана пирĕн колхоз срокчен, сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне, тултарчĕ. Государствăна [illegible] паха тĕштырă, пуринчен ытларах тулă, 46.032 пăт панă. Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана та пĕтĕмĕшпех тултарнă. Эпир пурĕ 44.000 литр сĕт, 136 центнер аш-какай, 14.375 çăмарта, 672 килограмм çăм, 177 тир панă.

Çакăн пекех çĕрулмипе утă обязательствисене те парса татнă. Государствăна ялхуçалăх налукĕ вăхăтра тÿлесе татнă, заем укçине срокчен хывнă. Çакăнпа пĕрле эпир кăçал ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене [illegible] пулăшнă. [illegible] пирĕн колхоз [illegible] ирĕке кăларнă районсене 13 тына-пăру, 80 сурăх, 18 сысна тата 2 лаша, вăл шутра ăратлă ăйăр, ярса панă.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, эпир агротехникăна тăтăшах лайăхлатса пыма тăрăшатпăр, хамăр колхоз уй-хирĕнче 10 пусăллă [illegible] туса пыратпăр. Эпир 1945 çулта [illegible] пуссине [illegible] тăрăшатпăр. Вăрлăхсене сортласа тасатса, амбарсене хывнă. Колхозăн лайăх сыпăкла ÿкерĕнĕ [illegible] хатĕрленĕ. [illegible]

Тăван çĕршыва ытларах тырпул памалла, çавăнпа та эпир аккаш çĕр лаптăкне çапма тăрăшатпăр. Кăçалхи çул эпир хĕрĕнче 700 гектар кĕрхи тырă акнă, çакă вăл пĕлтĕрхинчен 400 гектар ытларах пулать. Акас умĕн эпир çĕртме пуссине икĕ хутчен культиваци туса кăпкалăтрăмăр, тулăна вара сÿрелерĕмĕр. Акасса агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх срокĕсенче, сентябрĕн 1-мĕшĕнчен, акса хăвартрăмăр. Кĕрхи тырăсем агротехника тĕлĕшпе лайăх акса хăварни хăйĕн результачĕсене кăтартса пачĕ те ĕнтĕ. Ыраш тикĕс те калăпланса шăтса тухрĕ.

Пирĕн колхозниксем çитĕнÿсем тăвассипе паттăр Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерÿĕсене колхозниксене вăй-хăват [illegible] хавхалантарса килет. Кашни колхозник кунне 2—3 çыншăн ĕçлеме тăрăшать.

Пĕрремĕш уйхир бригадин бригадирĕ Григорий Андреевич Ваничкин, унăн мăшăрĕ Михаил тата хĕрĕ Евгения колхоз уйăхĕнче вăхăта шутласа тăмасăр ĕçлесе, [illegible] кашни çынна 8 уйăх хушшинче 1000 ĕçкунĕ ытла тунă, аванс шучĕпе 120 пăт тырă, çу, аш-какай, пыл тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем нумай илнĕ.

Сысна пăхакан Василиса Хижова çемьи те 1000 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ. 60 çулхи колхозник Григорий Андреевич Кондратьев, виçĕ фронтовикăн ашшĕ, юлашки уйăхра тыра тиенĕ çĕрте ĕçлесе, кашни кун 1,5—2-шер норма тултарса пынă. Конюх Василий Дмитриевич Еремин мĕнпур тихасене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерет, лашасене лайăх пăхса усрать. Трактор отрячĕн бригадирĕ Александр Максимович Артемьев çĕнĕ трактористсене куллен пулăшса пырать. Унăн бригади трактор ĕçĕсен планне пĕтĕмĕшпех тултарнă.

Пирĕн артельте ĕçкунĕсен минимумне тултарман пĕр колхозник те çук.

Колхозниксемпе колхозница юлташсем!

Совет çĕрĕ çинчи ĕçченсем! Гитлерла Германие эпир çĕнтерес кун çывăхра ĕнтĕ. Анчах çав çĕнтерÿ хăй тĕллĕн килмест. Ăна фронтра хаярран çапăçса тата тылра тÿрĕ кăмăллăн та вăя хĕрхенмесĕр ĕçлесе çĕнтерсе илмелле. Вилмеллех аманнă тискер кайăка хăйĕн шăтăкне хăваласа кĕртнĕ ĕнтĕ, ăна çавăнта çапса вĕлермелле, вĕлеретпĕр те. Вăрçăн татăклă тапхăрĕнче хамăрăн мĕнпур вăйсене хурса ĕçлер, ялхуçалăх çулне чыслăн вĕçлер, государствăна тырпул, аш-какай, çĕрулми, пахча-çимĕçсемпе ытти тĕрлĕ çимĕçсем ытларах парар, килес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсне кăçалхи кĕркуннех хывса хăварар.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXVII çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленес кунсенче эпир уйхирсенче тата фермăсенче ударлăн ĕçлеме шут тытрăмăр, хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илтĕмĕр:

1. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтермелле.

2. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне çĕрулми кăларса пĕтермелле тата пахча-çимĕçсене пухса кĕртмелле.

3. Кĕрхи çĕртме тата хура çĕртме тума государство панă плана октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

4. Выльăх витисене октябрĕн 5-мĕшĕнче юсаса хатĕрлесе çитермелле.

Çак обязательствăсене илсе, эпир мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе комбайнерсене, машинистсемпе механиксене, агрономсемпе зоотехниксене, ветеринари врачĕсене, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене Октябрь уявĕ умĕнчи социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр.

Хамăрăн [illegible] праçник умĕнче ĕçре çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвар, [illegible] ялхуçалăх çулне чыслăн вĕçлер, государствăна тырпул тата ытти продуктсем [illegible] ытларах парар. [illegible]

Хамăрăн тĕрĕс ĕç пĕтĕмĕшпех [illegible] Хĕрлĕ Çар çыхă пултăр!

Сывă пултăр хăватлă Совет çарĕ! Сывă пултăр пирĕн аслă сулпуç, пирĕн полководец, юратнă тăван Сталин!

Чĕнсе калана Саратов облаçĕнчи Воскресенски районри Калинин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе [illegible] пуххинче йышăннă.

Колхозниксен колхозницисен хушшинче чĕнсе калана çырса хунă: колхоз председателĕ Г. Н. МАРЬИН; [illegible] Г. А. ВАНИЧКИН, А. И. АВЕРЬЯНОВ; звеновод А. Г. КАБАНОВА; колхозниксем: Г. А. КОНДРАТЬЕВ, Е. Г. ЕРЕМИНА, П. Н. ИВЛИЕВА; трактор бригадирĕ: А. М. АРТЕМЬЕВ, В. Г. ЧИРКОВ; комбайнерсем: С. И. МОРДВИНОВ, Н. Т. ДМИТРИЕВ; трактористсем: П. В. ЕРЕМИН, К. СОКОЛОВА; [illegible] сĕт-çу фермин заведующийĕ Г. А. ХИЖОВ; сурăх фермин заведующийĕ А. И. МОРДВИНОВА; сысна фермин заведующийĕ Н. Ф. ЛАПУШКИН; доярккăсем: А. В. СОРОКИНА, Е. Е. ДУБОВИЦКАЯ; конюхсем: В. Д. ЕРЕМИН, И. Я. ФЕДОТОВ; ветсанитар В. И. УМЕНЫЧЕВ; колхозри парторганизаци секретарĕ К. В. ФИЛИППОВА; колхозри комсомол организаци секретарĕ Е. Ф. ЕСИНА.

Ĕççынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Комсомольски район тăрăх

48. **«Ударник»** колхоз (председателĕ **Гильманов** юлташ). Çак колхоз тырра сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, планран иртерсе 9 гектар акнă, государствăна тырă срокчен парса татнă.

49. **«Трактор»** колхоз (председателĕ **Иванов** юлташ). Ку колхоз 311 гектар тырра срокчен тата пĕр тăккаламасăр вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса çитернĕ, кĕрхи тырăсене агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 65 центнер тĕштырă панă.

50. **«Красный Октябрь»** колхоз (председателĕ **Акчурин** юлташ). Вăл тырра срокчен вырса пĕтернĕ, çак ĕçре машинăсемпе лайăх усă курнă, сентябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса çитернĕ, кĕлте турттарас ĕçре колхозпа колхозниксен майракаллă шултăра выльăхĕсемпе усă курнă, кĕрхи тырăсене агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

Муркаш районĕ тăрăх

51. **«Броневик»** колхоз (председателĕ **Матвеев** юлташ). Вăл 106 гектар тырра сентябрĕн 9-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăварнă, сентябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă.

52. **Свердлов ячĕпе тăракан** колхоз (председателĕ **Налимов** юлташ). Ку колхоз тырра вăхăтра вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсем акмалли плана пĕтĕмпех тултарнă, государствăна тырă срокчен парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 29 центнер тырă парса хунă.

53. **«Крестьянин»** колхоз (председателĕ **Вязов** юлташ). Колхоз тĕштырăсене сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 14 центнер тырă парса хунă.

54. **«Красное Сормово»** колхоз (председателĕ **Майков** юлташ). Çак колхоз 350 гектар çинчи тĕштырра сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне вырса пухнă, кĕрхи тырăсене районра чи малтан тата лайăх ĕçлесе акса пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 153 центнер тырă панă.

55. **«Красная Чувашия»** колхоз (председателĕ **Бочкин** юлташ). Ку колхоз тырра срокчен вырса пухнă, кĕрхи тырăсене агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 15 центнер тырă панă.

56. **«Искра»** колхоз (председателĕ **Смирнов** юлташ). Колхоз 205 гектар çинчи тĕштырăсене срокчен вырса пухнă, августăн 25-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсене акса пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă.

57. **«Ударник»** колхоз (председателĕ **Михайлов** юлташ). Вăл тырра срокчен вырса пĕтернĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 18 центнер тырă парса хунă.

58. **Жданов ячĕпе тăракан** колхоз (председателĕ **Осипов** юлташ). Вăл 175 гектар çинчи тырра сентябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ, кĕрхи тырăсене чи лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 75 центнер тырă парса хунă.

59. **Буденный ячĕпе тăракан** колхоз (председателĕ **Оньков** юлташ). Вăл тырра срокчен вырса пухнă, кĕрхи тырăсене августăн 25-мĕшĕнче акса пĕтернĕ, сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 23 центнер тырă парса хунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 2-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Октябрĕн 1-мĕшĕнче тĕрлĕ вырăнсенчи çапăçусенче нимĕçсен 9 танкне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 7 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Рига енче разведчиксем шыраса çÿренĕ. Псковпа Рига хушшинчи шоссе районĕнче нимĕçсен пехоти, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем пулăшнипе, кун каçиччен темиçе хут та контратака тунă. Пирĕн подразделени гитлеровецсене каялла хăваласа янă, вĕсене пирĕн оборонăн малти линийĕ патне çитме паман. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли таран выртса юлнă. Нимĕçсен 2 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен пĕр туппине пĕтерсе тăкнă. Рига хулинчен хĕвелтухăçнерехре совет разведчикĕсен отрячĕ нимĕç траншейисен пĕрремĕш ретне вăркăнса кĕнĕ. Гитлеровецсем, хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тытса илес тесе, часах контратака тунă. Пирĕн разведчиксем пăшалсемпе, пулеметсемпе персе, тăшмана сапаласа янă, хăйсем йышăннă траншейăсенче çирĕпленсе ларнă.

* * *

Иелгава (Митава) хули районĕнче нимĕçсен 2 взвочĕ Лиелупе шывĕ урлă кимĕсемпе ишсе каçма хăтланнă. Пирĕн боецсем тăшман салтакĕсене вăхăтра асăрханă та вĕсене пăшалсемпе тата пулеметсемпе пеме тытăннă. Салтаксем ларса пыракан 3 кимме шыва путарнă. Ытти кимĕсем çинчи нимĕçсем вара часах каялла çавăрăнса кайнă та çыран хĕррине тухсан тарса саланнă.

* * *

Мариамполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени снайперĕсем кун каçиччен 60 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Гварди лейтенанчĕ Цикунов ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ çĕрле пралук карти урлă каçнă та нимĕçсем тăракан вырăна систермесĕр пырса тухнă. Тул çутăлса килнĕ чух пирĕн боецсем, автоматсемпе персе тата гранатăсем ывăтса, тăшман хуралне пĕтерсе тăкнă. Унтан вилнĕ нимĕçсен документсене илнĕ те хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Турка хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пĕр чаçăн подразделенийĕсем тул çинчи улăхпа пырса, тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕ патне пырса тухнă. Унтан ăна сасартăк атакăланă та нимĕçсен çав пунктри гарнизонне пĕтĕмĕшпех вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем çÿллĕ вырăнсем çине тупăсемпе пулеметсем вырнаçтарса лартнă, хăйсен позицийĕсем патне пымалли вырăнсене вăйлăн персе тăнă. Пирĕн боецсем туллă-вăрманлă вырăн ти йывăр условисенче тăшмантан айккипе иртсе кайнă та ăна тылран пырса çапнă. Нимĕçсем пĕр йĕркесĕр каялла чакнă. Гитлеровецсен икĕ ротине вĕлерсе пĕтернĕ. Танксене пемелли 4 тупă, 3 миномет тата 12 пулемет тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕ хăй тĕллĕн çÿрекен десант баржине тата тăшман мотоботне шыва путарнă.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн летчикĕсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен темиçе суднипе атакăланă. Бомбăсем тÿрĕ пырса тивнипе тăшманăн 5.000 тонна таякан транспорчĕ тата пĕр тральщикĕ шыва путнă.

* * *

Рига хулинчен хĕвелтухăçнерехре нимĕçсен 32-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 4-мĕш полкри салтаксен пĕр ушкăнĕ Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Куçнă салтаксем Стефан Л., Карл Б., Георг М. çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть пирĕн полка 50-мĕш армейски корпусăн командирĕ Вегенер генерал килсе кайрĕ. Вăл салтаксем умĕнче сăмах тухса каларĕ. Вегенер генерал çапла каларĕ: «Балтика тăрăхĕнчи нимĕç çарĕсен лару-тăрăвĕ калама çук йывăр. Еç мĕнпе пĕтессине никам та калама пултараймасть. Пире çĕнĕ йышши хĕçпăшал ярса пама пулчĕç, анчах вăл мĕнле хĕçпăшал иккенне эпĕ пĕлместĕп. Çав панă сăмаха пурнăçа кĕртĕç-и, кĕртмĕç-и — эпĕ ун çинчен сире калама пултараймастăп, мĕншĕн тесен хам та нимĕн те пĕлместĕп. Çавăнпа сирĕн, салтаксен, чи начар пулассине кĕтсе илме хатĕр тăмалла», терĕ. Генерал салхуллăччĕ, питĕ шухăша кайнăччĕ. Унăн сăмахĕсенчен эпир Вегенер генерал пирĕн лару-тăрăва шанчăксăр тесе шутланине пĕлтĕмĕр.

Каçхине Гельмут Р. обер-ефрейтор салтаксен пĕр пĕчĕк ушкăнĕнче çапла каларĕ: «Пирĕн чăнах та вăрттăн хĕçпăшал пур, унпа эпир хамăра çăлса хăварма пултаратпăр», терĕ. Пурте Гельмутран—мĕнле хĕçпăшал вăл? тесе ыйтма тытăнчĕç. Гельмут çапла каларĕ: «Ахаль патак тата шурă тутăр тупăр. Çакă вăл сире çăлса хăвармалли хĕçпăшал пулса тăрать», терĕ. Тепĕр кунне эпир, 16 çын, Гельмут ертсе пынипе, хамăр чаçран кайрăмăр та вырăссен енне куçрăмăр».

ВКП(б) Обкомĕнче

Республикăра авăн çапас ĕç çителĕксĕр пыни çинчен

ВКП(б) Центральный Комитечĕ Чăваш республикинчи колхозсенче авăн çапас ĕç питех те çителĕксĕр пырать тесе хак панине ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пĕтĕмĕшпех тĕрĕс тесе шутлать. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра вырнă тырпулран пурĕ те 64,7 процент кăна çапса пуçтарнă, иртнĕ çул ку вăхăт тĕлне авăна нумай ытларах çапнă пулнă. Авăн çапас ĕç уйрăмах Чкаловски, Йĕпреç, Улатăр, Етĕрне, Комсомольски, Первомайски, Тăвай тата Елчĕк районĕсенче япăх пырать. Çав районсенче октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне вырнă тырпулран пурĕ те 45—58 процент кăна çапса пуçтарнă. Чылай районсенче юлашки пилĕккунлăхра авăн çапас ĕçĕн хăвăртлăхне чакарнă. Красноармейски районри колхозсенче сентябрĕн юлашки пилĕккунлăхĕнче унчченхи пилĕккунлăхринчен 824 гектар чухлĕ сахалтарах çапса пуçтарнă, Советски районра сентябрĕн 25-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче 135 гектар çинчи тырпула кăна çапса пуçтарнă, унччченхи пилĕккунлăхра 2423 гектар çинчи тырпула çапнă пулнă. Авăн çапас ĕçĕн хăвăртлăхне çавăн пекех тата Сĕнтĕр, Çĕрпÿ, Канаш, Çĕмĕрле районĕсенчи ялхуçалăх артелĕсенче те сÿрĕклетнĕ.

Çав районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем хăйсен япăх ĕçне тракторпа авăн çапма горючи çителĕксĕр тесе витме хăтланаççĕ, çав вăхăтрах вĕсем горючие перекетлĕнрех расходлас тата МТС тракторĕсемпе молотилкисен ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Çав районсенчи нумай колхозсенче лашапа ĕçлекен молотилкăсемпе питех те çителĕксĕр усă кураççĕ, авăна алăпа çапассине организацилемен. Тырпулсене уйхиртен пĕтĕмпе пухса кĕртнĕ хыççăн кăна авăн çапас шухăш-кăмăлпа лăпланса ларни çинчен калакан фактсем те пур. Авăн çапас ĕçре çавăн пек сиенлĕ черетлĕхе тытса пыни государствăна тырă парас ĕçе чăрмантарать.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсем тата çĕрĕç органĕсем авăн çапнă çĕрте ĕçе организацилесси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ, мĕнпур колхозниксене авăн çапнă çĕре явăçтарма, авăн çапакан бригадăсене талăкĕ-талăкĕпех ĕçлеттермелле тума тăрăшмаççĕ. Чылай çĕрте колхозниксем ĕçе кая юлса тухаççĕ, таврăнасса вара ир таврăнаççĕ.

Колхозсем авăн çапас ĕçе çавăн пек тÿсме çук тăсса пыни государствăна тырă парас ĕçе вăраха хăварса пырать, çавăн пирки тата тырпул нумай тăккаланса пĕтме пултарать. Халĕ, чылай колхозсем государствăна тырă парса татнă тата авăн çапса пĕтернĕ чухне, кая юлса пыракан колхозсем çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Анчах та партин чылай райкомĕсемпе райисполкомсем пулса тăнă лару-тăрăва шута илмен, ĕçе ертсе пырассин меслечĕсене улăштарман тата кая юлса пыракан колхозсенче авăн çапассипе государствăна тырă парас ĕçсен хăвăртлăхне ÿстерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ, кая юлса пыракан колхозсене çак паха ĕçе ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе кирлĕ пулăшу памаççĕ.

1. Парти райкомĕсен секретарĕсене, райсовет исполкомĕсен председателĕсене тата МТС директорĕсене авăн çапас ĕçĕн хăвăртлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушас. Кашни колхозра уборка ĕçĕсене мĕнпур колхозниксене явăçтармалла, авăн çапнă çĕрте ĕçе тĕрĕс организацилесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла; колхозниксен ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, ĕçкунĕпе май килнĕ таранах туллин усă курмалла.

2. Парти райкомĕсемпе райисполкомсене авăн çапас ĕç кашни колхозра мĕнле пынине тĕрĕслесе тухма, колхозсем патне пилĕккунлăх заданисем çитерме, çав заданисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине çирĕп контроллесе тăма хушас. Мĕнпур колхозсенче авăн çапма ятарласа бригадăсем организацилемелле, çав бригадăсенчи колхозниксене авăн ĕçĕсем пĕтиччен урăх ĕçе куçарма чармалла.

Районсен руководителĕсене çакăн пирки асăрхаттарас: авăн çапас ĕçе ăнăçлăн вĕçлесси лашапа ĕçлекен молотилкăсемпе пĕлсе те тухăçлăн усă курнинчен тата авăна алăпа çапассине организацилеме пĕлнинчен килет. Колхозсенчи мĕнпур молотилкăсемпе талăкĕ-талăкĕпех авăн çапмалла тăвас пулать.

3. Çĕрĕç Халăх Комиссарне Малов юлташа МТС-сенчи молотилкăсемпе комбайнсен чĕнсем, горючи, запаслă пайсем мĕн чухлĕ пуррине тĕрĕслесе тухма, сельхозснабăн тата автотракторосбытăн склачĕсенче запаслă пайсем мĕн чухлĕ пуррине шута илме, вĕсене МТС-сем тăрăх тĕрĕс валеçессине тата вĕсене вырăна вăхăтра çитерессине организацилеме хушас.

4. Çумăрлă çанталăкра та молотилкăсемпе комбайнсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле тăвас, çавăн пекех тырпулсене пăсăласран сыхламалла тăвас шутпа, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, райисполкомсен председателĕсене тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсене çапла тума хушас: колхозсенче витнĕ итемсем туса йĕркелемелле, комбайнсемпе молотилкăсем айĕнчен тухакан тĕштырра çийĕнчех типĕтессине, тырпула итем çинче чухне тата хатĕрлев пункчĕсене, колхоз амбарĕсене турттарнă чухне çирĕп шута илессипе тĕплĕн сыхлассине организацилемелле.

5. Парти райкомĕсен секретарĕсемпе райисполкомсен председателĕсене тырпул хатĕрлевне ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме хушас, кая юлнă колхозсенче государствăна тырă памалли плана тултарнă çĕре партипе совет органĕсен мĕнпур вăйне мобилизацилемелле, вĕсене авăн çапас тата хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарас ĕçре пур енĕпе те пулăшу парса тăма хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри перекет кассисенчи выляса илекен вкладсен тăваттăмĕш тиражне 1944 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче Шупашкарта иртерме йышăннă. Тираж комиссийĕн председателĕ пулма Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕн председатель заместительне А. В. Киселев юлташа, комисси председателĕн заместителĕ пулма Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисен тата государство кредичĕн управленийĕн начальник заместительне А. П. Самойлова юлташа тата комисси членĕсем пулма ВКП(б) Шупашкар хула комитетĕнчен А. И. Чиркова юлташа, Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатĕнчен Г. П. Платонов юлташа, Финанспа банк работникĕсен обкомĕнчен М. Г. Тарасова юлташа, тир-сăран комбинатĕнчи стахановкăна Т. Т. Жукова юлташа, табак фабрикинчи комсодран А. С. Микулинский юлташа, пир-авăр фабрикинчи комсодран Э. Д. Клапкина юлташа çирĕплетнĕ. Комисси ответлă секретарĕ пулма К. И. Будников юлташа уйăрнă.

НИКОПОЛЬ—МАРГАНЕЦ БАССЕЙННЕ ЮСАСА ХУТА ЯНА

Никополь—Марганец бассейнĕнче юсав ĕçĕсем анлăн сарăлса пыраççĕ. Бассейнри 18 шахтăран 15-ĕшĕн çĕр çинчи сооруженийĕсене туса пĕтернĕ. Çичĕ шахтăра электричество оборудованине вырнаçтарса лартнă. Ансăр чугун çулсене, 8 электровоза тата 3 мотовоза ĕçе яма хатĕрленĕ. Орджоникидзе ячĕпе тăракан рудникра икĕ промывочнăй фабрикăна юсаса пĕтернĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан рудникра икĕ фабрикăна юсаса пĕтернĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан рудникра çĕнĕ фабрика тăваççĕ. Бассейнри икĕ шахта руда кăларма тытăннă. Вĕсем кĕске вăхăтрах 30.000 тонна руда кăларнă. (ТАСС).

Рига енче

ÇАПАÇУРИ ÇАР, октябрĕн 2-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕсем).** Рига заливĕ хĕрринче нимĕçсем вăрманлă-шурлăхлă вырăнта юхан шывсемпе кÿлĕсен системи çине таянса тăраççĕ. Хальхи вăхăтри йышши инженери чăрмавĕсем, çын çÿллĕш траншейăсем, пралук картисем тата мина хирĕсем пирĕн наступлени туса пыракан подразделенисен çулне пÿлсе хунă. Нимĕçсем çав рубежа пехотăпа артиллерин пысăк вăйĕсене илсе пырса тăратнă та вăйлă хирĕç тăраççĕ.

Пирĕн пĕр батарейăн позицийĕсене нимĕç автоматчикĕсен пĕр ушкăнĕ тапăннă. Артиллеристсем хăйсене пур енчен те хÿтĕлеме вырнаçса тăнă. Тупăсемпе тата винтовкăсемпе персе, вĕсем тăшман салтакĕсен ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Нимĕç автоматчикĕсен пысăк пайне вĕлерсе пĕтернĕ, пĕр пайне тыткăна илнĕ. Темиçе участокра пирĕн пехотинецсем, артиллерипе тата авиаципе килĕштерсе кĕрешсе, тăшман оборонине вăйлăн пыра-пыра çапнă, унтан ун ăшне савăлланса кĕрсе кайнă. Пĕр пехотнăй часть пралук картисемпе мина хирĕсем урлă каçнă та тăшманăн пĕрремĕш траншейи патне вăркăннă. Унта вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Нимĕç пулеметчикĕсемпе стрелокĕсем совет боецĕсене малалла кайма чарасшăн пулнă. Анчах та пирĕн боецсем çав траншейăча тăшмантан тасатнă та малалла кайнă.

Пĕр участокра пирĕн малта пыракан отрядра хăй тĕллĕн çÿрекен установкăсем пулнă, вĕсем çинче автоматчиксен десанчĕ ларса пынă. Çĕрле вĕсем шоссе çине тухнă, унтан чугун çул патне çитнĕ те засада тунă. Унта вĕсем нимĕçсен çапăçу районĕнче çÿрекен бронепоездне кĕтсе тăнă. Часах бронепоезд курăнса кайнă. Артиллеристсем ăна пеме пуçланă. Бронепоезд чарăннă та каялла кайма хăтланнă, анчах унта чугун çула пĕрремĕш ушкăнтан çурçĕртерехри вырăна пырса тухнă хăй тĕллĕн çÿрекен артиллери татнă. Пирĕн хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем тата унта пырса çитнĕ танкистсем вара, пĕрле пыра-пыра çапса, бронепоезда çĕмĕрнĕ.

Унтан çав тупăсем, хăйсем умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртсе пырса, тăшман тылне кĕрсе кайнă, унти çулсене татнă, вара тăшман колоннине хăваласа çитнĕ те ăна пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн саперсем хăйсене хăйсем шеллемесĕр кĕрешеççĕ. Тăшман шыв урлă хывнă мĕнпур кĕперсене сирпĕнтерсе янă та çав шывăн хĕвеланăç хĕрринче çирĕпленсе ларнă. Çĕрле саперсем тăшман персе тăнă вăхăтрах çав шыв патне пымалли меллĕ вырăнсене тупнă, шывăн тарăнăшне виçсе илнĕ. Смирнов старши лейтенантăн роти вăрманта кĕпер тумалли материалсем хатĕрленĕ те тул çутăличченех кĕпер туса хунă. Пирĕн пехотинецсем гитлеровецсене кĕтмен çĕртен тапăннă, вĕсен траншейине вăркăнса кĕнĕ, нимĕçсемпе çапăçса, вĕсем тăракан вырăна шалалла кĕрсе кайнă.

Кĕркуннехи çумăрсем тата пĕлĕтсем аялтах вĕçсе çÿрени авиацие кансĕрлеççĕ. Анчах та пирĕн летчиксем, çанталăк начар тăрать пулин те, тăшман оборонипе çулйĕрĕсене çаплах пыра-пыра çапаççĕ.

П. БАРАННИКОВ,
А. БЕЙЛИН.

Аслă Октябрь уявĕ тĕлне кашни колхоз мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе çитертĕр, государствăна тырă тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем памалли плансене тултартăр, выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çиттĕр!

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ

СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртет

Шупашкарти чăлха фабрикинчи котельщица У. Гурьева юлташ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кулленхи ĕç нормине 140 процентран кая мар тултарма сăмах панă. Вăл хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртсе пырать. Халĕ Гурьева юлташ сменăра 376 мăшăр чăлха çыхас вырăнне 700 мăшăр таран çыхать. Вăл хăйĕн ĕç тухăçлăхне кулленех ӳстерсе пырать.

Укерчĕк çинче: Шупашкарти чăлха фабрикинчи стахановка У. Гурьева юлташ хăйĕн станокĕпе ĕçлет.

Обязательствăсене пурнăçа кĕртеççĕ

ШĂХАСАН, октябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри предприятисемпе артельсен коллективĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртеççĕ. [illegible]

[illegible]

В. ЯКОВЛЕВ.

Фронтпа çĕршыва укçа-тенкĕ те тырпул пекех кирлĕ

МУРКАШ, октябрĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Халăхран пухнă укçа-тенкĕ нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе тăкас вăхăта çывхартма пулăшать. Çакна асра тытса, районри чылай ялсоветсем укçа-тенкĕ пухмалли плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Çапла, Атапай, Кашман, Йӳçкасси ялсоветсем III-мĕш кварталти плана ирттерсе тултарнă. Халĕ вĕсем Октябрь уявне укça-тенкĕ пухас тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр ялсоветсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе иккĕмĕш черетри ĕç вырăнне хураççĕ. Шĕвĕш, Панкли, Матьăк ялсоветсем III-мĕш кварталти плана пурĕ те 14—17-шер процент çеç тултарнă. Çак ялсоветсен налог агенчĕсем Васильев, Андреева тата Федоров юлташсем халăх хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пымаççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕ укçа пухса çӳрессипе çеç тесе шутлаççĕ. Вĕсем сӳрĕк ĕçленипе ялсовет председателĕсемпе активистсем те килĕшсе лараççĕ. Çакăн пек ĕçленине пула ĕнтĕ район III-мĕш кварталти плана 62 процент çеç тултарнă.

Халĕ пĕтĕм çĕршывра Октябрь уявне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăрту анлăн саралса пырать. Финанс работникĕсен задачи — уяв умĕнхи ăмăртăва сарса пырса, финанс планне пур тӳлевсем тăрăх та вăхăтра тултарса пымалла тăвасси пулать. Çакна тума хушаççĕ фронтпа çĕршыв интересĕсем.

Т. ИВАНОВ.

ВИÇĔ УЙĂХ ИРТСЕН

Петрозаводск хулине ирĕке кăларни виçĕ уйăх çитрĕ. Столицăра пурăнакан ĕçсыннисем хăйсен хулине юсаса ура çине тăратма пĕтĕм вăйпа тытăннă. Икĕ электростанцие, водопровода, çăкăр пĕçерекен завода, 4 кĕпере, 12 шкула, больницăна юсаса хута янă.

Хулара музыкăллă комеди театрĕ, 2 кинотеатр, 32 столовăй, 32 магазин, ача сачĕсемпе яслисем ĕçлеççĕ. Октябрĕн пуçламĕш кунĕсенче пионерсен дворецĕ уçăлать. (ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ 1944 ÇУЛХИ ОКТЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Вăрлăхлăх акнă куракăсене çапса илнĕ
Чурачăк	79,3	100,0	10,6
Элĕк	78,5	91,1	52,8
Сĕнтĕр	74,7	76,2	52,3
Çĕрпӳ	73,7	91,2	61,6
Шупашкар	71,5	69,0	61,3
Муркаш	70,3	55,6	28,0
Шăхасан	70,0	15,7	—
Советски	69,8	74,8	8,3
Ишлей	69,5	64,5	21,0
Канаш	69,0	72,4	6,6
Куславкка	67,3	56,0	9,0
Красноармейски	66,4	69,2	31,0
Сĕнтĕрвăрри	66,0	63,9	63,9
Калинино	65,5	82,2	3,7
Пăрачкав	65,5	23,1	—
Кувакино	64,6	27,9	—
Шăмăршă	64,2	83,1	19,0
Йĕпреç	62,4	35,7	—
Вăрнар	62,2	29,0	10,8
Вăрмар	61,9	42,3	9,2
Çĕмĕрле	61,7	63,8	—
Хĕрлĕ Чутай	60,9	75,5	—
Октябрьски	59,1	39,2	19,5
Тăвай	58,7	39,4	8,1
Елчĕк	58,2	65,5	29,9
Первомайски	57,8	79,9	—
Етĕрне	55,6	55,4	—
Улатăр	55,2	11,6	22,7
Комсомольски	53,8	51,8	28,5
Чкаловски	46,4	100,0	12,0
Шупашкар хули	93,2	45,8	—
Пĕтĕмпе	64,7	60,8	20,0

Асăрхаттарни: Вăрнар районĕнче колхозсенче тырпул çапса пĕтерес ĕçе мĕнле пынине сентябрĕн 25-мĕшĕнче илнĕ данныйсем тăрăх кăтартнă.

Малта пыракан комбайнерсем

Елчĕк МТС-ĕнчи малта пыракан комбайнерсем, кăçалхи уборкăра хăйсен планĕсене нумай ирттерсе тултарса, çĕнĕ çитĕнӳ турĕç.

МТС-ра пурĕ комбайнсемпе 1.400 гектар вырса пухнă. Хĕрлĕ ялавлă 10-мĕш трактор бригадинчи комбайнер Илья Лукиянов план тăрăх 110 гектар вырас вырăнне 215 гектар вырса пухрĕ. Лукиянов хăй çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçа кĕртрĕ. Вăл, куллен 16—20-шер гектар таран вырса, нормăна 200—240 процент таран тултарса пычĕ.

Çавăн пекех комбайнер Владимир Указов комбайнпа вырса пухмалли плана 164 процент, комбайнер И. Ефимов 155 процент тултарнă.

Хальхи вăхăтра вĕсем комбайнсемпе авăн çапаççĕ.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Плана 201,6 процент тултарнă

Çĕрпӳ МТС-ĕнчи трактористсемпе тракористкăсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Иванов юлташ ертсе пыракан 3-мĕш трактор бригади кĕрхи çĕртме тумалли плана 169 процент, 12-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Баранов юлташ) 201,6 процент тултарнă.

[illegible]

Б. КЛЕМЕНТЬЕВА, МТС-ĕн старши агрономĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕНЧЕ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ 1944 ÇУЛХИ ОКТЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Çĕртме тунă
Чурачăк	78,2
Элĕк	68,9
Муркаш	62,4
Октябрьски	56,8
Шупашкар	56,8
Çĕрпӳ	56,0
Красноармейски	54,1
Сĕнтĕрвăрри	51,1
Куславкка	50,5
Ишлей	49,1
Калинино	46,1
Вăрмар	40,9
Етĕрне	36,5
Сĕнтĕр	35,8
Шăхасан	34,7
Канаш	32,3
Советски	27,1
Елчĕк	26,8
Вăрнар	20,8
Хĕрлĕ Чутай	20,8
Комсомольски	19,1
Чкаловски	16,9
Тăвай	16,5
Йĕпреç	15,5
Улатăр	13,4
Шăмăршă	12,9
Çĕмĕрле	11,5
Пăрачкав	11,2
Первомайски	7,6
Кувакино	5,5
Шупашкар хули	72,0
Пĕтĕмпе	34,2

Асăрхаттарни: Вăрнар районĕнче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç мĕнле пынине сентябрĕн 25-мĕшĕнчи данныйсем тăрăх кăтартнă.

Ăмăртава хутшăнса

Етĕрне районĕнчи «Комбайн» колхоз çамрăкĕсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. [illegible]

[illegible]

Я. ТРОФИМОВ.

Пахча-çимĕçшĕн вăрлăхсем параççĕ

ССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукцийĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире колхозсем обязательство тăрăх пахча-çимĕçсем парас вырăнне çав пахча-çимĕçсемпе тымар-çимĕçсен вăрлăхĕсене пама пултарнине кăтартса панă.

Пахча-çимĕç вăрлăхĕсене, вĕсем лайăх пахалăхлă пулсан, «Сортсемовощ» контори йышăнать. Вăрлăхсене йышăнни çинчен калакан квитанцисене Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйне кăтартмалла, çавăн хыççăн вара вăрлăхсем панине пахча-çимĕç панă шута кĕртеççĕ.

Пахча-çимĕç вăрлăхĕсем туса илес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен колхозсем кăçал государствăна вăрлăх парса нумай усă кураççĕ, пахча-çимĕç памалли обязательствăсене пĕтĕмпех вăрлăхсемпе татаççĕ. Сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Первое мая» колхоз 1944 çулта 4.400 килограмм пахча-çимĕçшĕн пĕтĕмпех вăрлăхсем панă. Октябрĕн 1-мĕшĕнче çав колхоз тата 24 килограмм купăста, 27 килограмм чĕкĕнтĕр, 6 килограмм кишĕр, 9,5 килограмм çарăк, 1,6 килограмм помидор вăрлăхĕсем хатĕрлесе, вĕсене государствăна панă. Çапла вара «Первое мая» колхоз пахча-çимĕç тата çĕрулми памалли обязательствăсене пĕтĕмпех пахча-çимĕç вăрлăхĕсемпе татнă. Пахча-çимĕç акса тăвас тĕлĕшпе ку колхозра Михайлов юлташ бригадир пулса ĕçлет.

[illegible] малли плана пĕтĕмпех пахча-çимĕç вăрлăхĕпе татнă. Вĕсем 25 килограмм помидор вăрлăхĕ, 100 килограмм чĕкĕнтĕр вăрлăхĕ, 500 килограмм бобы, 10 центнер яшка пăрçи панă.

Анчах чылай колхозсенче пахча-çимĕç вăрлăхĕсем туса илес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Калинино, Елчĕк районĕсенчи колхозсенче пахча-çимĕç вăрлăхĕсене пухасси япăх пырать. Уйрăм колхозсенче вăрлăхсене пухма та, государствăна пама та тытăнман.

Елчĕк районĕнчи «Осоавиахим» колхозра 100 килограмм купăста вăрлăхĕ уйăх ытла выртать. Ăна государствăна парасси çинчен шухăшламаççĕ те.

Çак районсенче ку ĕçе çĕрĕç пайĕсем те кирлĕ пек контроллесе тăмаççĕ. Пахча-çимĕç вăрлăхĕсем пирĕн колхозсене те, государствăна та питĕ кирлĕ. Çав вăхăтрах, пахча-çимĕçсемпе çĕрулми вырăнне государствăна пахча-çимĕç вăрлăхĕ пани колхозри ĕçе те çăмăллатать, туртăм вăйне ытларах упраса хăварма май парать.

Вăрлăх акса тăвакан кашни колхозăнах пахча-çимĕç вăрлăхĕсене халех государствăна памалла. Районри çĕрĕç органĕсен, уйрăмах агрономсен, вăрлăха вăхăтра пухса илессине организацилемелле.

А. КУЗНЕЦОВА, «Сортсемовощ» конторин управляющийĕ.

Ăратлă выльăхсем ĕрчетессишĕн

Отечественнăй аслă вăрçă вăхатĕнче пирĕн колхозсем, фронтпа Хĕрлĕ Çара ытларах аш-какай, сĕт-çу парса тăрас тесе, пĕтĕм вăйя хурса ĕçлерĕç. Ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, малалла аталантарчĕç.

1940 çулта ăратлă ĕнесен фермисем республикăра пурĕ те 8 çеç пулнă. Халĕ вĕсен шучĕ 20-рен те иртет. Ăратлă сысна фермисем 1940 çулхипе танлаштарсан икĕ хут ӳснĕ, ăратлă лаша фермисем 3 пулнă, халĕ 13 ферма пур.

Анчах ăратлă выльăхсен йышĕ çителĕклĕ теме пултараймастпăр-ха эпир. Пĕтĕм выльăхсен хисепĕнчен ăратлă лашасем — 2,2 процент, ĕнесем—3 процент, сыснасем —2,3 процент, сурăхсем—4,3 процент кăна йышăнаççĕ. Çак цифрăсем вĕсем ăратлă выльăхсем ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен хăйсемех калаççĕ.

Кашни ăратлă выльăха куç шăрçине сыхланă пек сыхламалла. Уйрăмăнах ку тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕсенчи тата участоксенчи зоотехниксемпе ветеринарсен тимлĕн ĕçлемелле. Ăратлă выльăхсене колхозсенче мĕнле пăхнине тĕрĕслемелле, вĕсене пăхма шанчăклă çынсене хушмалла.

Ăратлă выльăхсене пăхасси Канаш районĕнчи уйрăм колхозсенче уйрăмах япăх тăрать. Райçĕрĕç пайĕн главнăй зоотехникĕ Спиридонов юлташ сăлтава ку тĕлĕшпе ĕçлекен зоотехник çукки çине йăвантарасшăн. Анчах та хăй вăл колхозсенче ăратлă выльăхсене пăхас ĕç мĕнле тăнипе сахал интересленет. Çĕрпӳ райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕ Федоров, Çĕмĕрле райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕ Будылин, Советски райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕ Орлова юлташсем ăратлă выльăхсем енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Ăратлă выльăхсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ылттăн фонд пулса тăраççĕ. Çав выльăхсене кашни колхозрах уйрăм шута илмелле, çакăнпа пĕрлех вĕсене ăратлă выльăхсене çырса пымалли районри кĕнеке çине кĕртмелле.

Ф. ЯКОВЛЕВ, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ăратлă выльăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен инспекторĕ.

Счетоводсемпе куллен ĕçлемелле

Шăхасан районĕнче юлашки çулсенче колхозри счетоводсем çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Çавна пула шут ĕçне лайăх пĕлекен счетоводсем сахалланчĕç. Счетоводсене ĕçшĕн тӳлес йĕркене нумай çĕрте пăсаççĕ. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра счетовода кунне 5 килограмм тырă параççĕ.

Район руководителĕсем çакна пĕлеççĕ, анчах та счетоводсем хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Вăл кăна та мар, счетоводсемпе канашлусем те туса ирттермеççĕ.

Колхозри счетоводран хуçалăхри йĕркелĕх нумай килет. Колхозра счетовод начар пулсан, ĕçкунĕсем пăтрашăнса пĕтеççĕ, колхозниксен ĕçлес кăмăлĕ чакать, ĕç дисциплини япăхланать. Çакна шута илсе, районра счетоводсен курсне организацилени питĕ вырăнлă пулнă пулĕччĕ.

А. ЧЕРНОВ.

Выльăх-чĕрлĕхшĕн тăрăшаççĕ

Елчĕк районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра лаша витисене, ферма çуртĕсене пĕтĕмпех тырă вырма тухиччен юсаса пĕтернĕ. Кăçал 35 лаша, 60 ĕне валли çĕнĕрен вите тунă. Выльăхсем валли çителĕклĕ таран апат хатĕрленĕ. 55 гектар çинчи утта вăхăтра çулса, лайăх типĕтсе капана хывнă. Колхозниксем калана тăрăх, утă нихăçан та кăçалхи чухлĕ хатĕрлемен.

— Иртнĕ хĕлле выльăхсем валли çителĕклĕ апат пулман пирки колхоз нумай сиен курчĕ, кăçал иртнĕ çулхи йăнăша тумастпăр, — тет колхоз председателĕ Каринкин юлташ.

Н. САМАРКИНА.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Нанси хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра союзниксен çарĕсем Гремесэ вăрманĕнче малалла куçнă тата Френ-ан-Сонуа хулипе Кутюра хули тавраш ĕнчи çӳллĕ вырăнсене тытса илнĕ. Жаллокур çывăхĕнче тăшманăн вăйлă контратакине сирсе янă. Эпиналь районĕнче союзниксен çарĕсем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине пăхмасăрах, ăнăçу тунă.

Союзниксен çарĕсем Сен-Жан-дю-Марш хулине йышăннă. Кале хулине тăшмантан тасатса çитернĕ.

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италири фронтăн вăтаçĕрти секторĕнче 5-мĕш армири американецсемпе акăлчансен чаçĕсене, По шывĕн улăхĕпе малалла куçса пыраканскерсене, тăшман калама çук вăйлă хирĕç тăрать. Союзниксен çарĕсем темиçе участокра малалла куçнă. Адриатика секторĕнче паллă улшăнусемех пулман.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ 1.000 вĕçев тунă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

КЕЛЬН, КАССЕЛЬ, ХАММ ХУЛИСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Брауншвейгри тата Германин ытти районĕсенчи объектсене тапăннă. Самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем октябрĕн 2-мĕшĕнче Кельнпа Кассель районĕнчи (Германи) объектсене тапăннă.

Октябрĕн 2-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен «Либерейтор» йышши бомбардировщиксем Хамм хулинчи сортировка станцине тапăннă. Октябрĕн 2-мĕшĕнче Германи çинче мĕн пурĕ американецсен 1200 бомбардировщикне яхăн вĕçсе çӳресе кĕрешнĕ.

Будапештри лару-тăру

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат Бернран çапла пĕлтерет:

«Будапешт çине бомбăсем пăрахнине пула çав хула питĕ хытă ишĕлнĕ. Хулан вăтаçĕрти пайĕ тата хĕвелтухăç енчипе хĕвеланăç енчи районĕсем уйрăмах вăйлă [illegible] сирпĕнтерсе янă. Хула ишĕлчĕк купи пулса тăнă. Темиçе министр вăйлă аманнă. Поездсем çӳресси йĕркерен тухнă. Дунай шывĕпе Тисса шывĕ çинчи кĕперсене çĕмĕрни Венгри транспортне уйрăмах хытă пырса çапать. Нацистсене тата нацистсем майлă ĕçлекенсене вĕлересси ӳссе пырать. Темиçе хулара стачкăсем тусе [illegible]». [illegible]

Совет Союзĕ Прага халăхне пулăшни çинчен поляк хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛЮБЛИН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). [illegible]

[illegible] Смирнов генерал-полковник панă. Вăл халăха сыхлас ĕçпе социальнăй обеспечени отделĕн руководителĕн заместителĕпе Можицкий докторпа тата Млодзяновский докторпа пĕрле çав медикаментсене валеçме тытăннă. «Совет правительстви Прага халăхне медицина енчен пулăшни—Совет Союзĕ поляк халăхне кăмăлласа, унпа туслăн пурăнма тăрăшнине тепĕр хут кăтартса парать, — тесе çы[illegible] тартать. Вăл пĕр укçасăр, ун вырăнне мĕн те пулин илме шутламасăр пулăшни пулать, тĕнчери халăхсем хушшинчи çыхăнусенче çавăн пек пулăшни сайра тĕл пулать. Варшава хулин ирĕке кăларнă пайĕнче пурăнакан çынсене çапла пулăшни икĕ славян халăхĕн, пĕрле юн тăкса пĕрлешнĕскерсен, союзне тата ытларах çирĕплетĕ».

ПРАГĂРИ МИТИНГ

ЛЮБЛИН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Прагăра (Варшавăпа юнашар ларакан хулара) Совет Союзĕ Прага халăхне пĕр укçасăр 10.000 тонна çăнăх тата кирлĕ медикаментсем панă ятпа митинг пулса иртнĕ.

Митинга пухăннă çынсем Совет правительствин Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ çумĕнчи представительне Булганин генерал-полковника телеграмма янă. Çав телеграммăра вĕсем Прага халăхне пулăшнăшăн Совет правительствине чунтан-чĕререн тав тăваççĕ. Митинг Польша халăхĕн ирĕклĕх комитетне те саламлă телеграмма янă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЮТ ÇĔРШЫВ РАБОЧИЙĔСЕМ ВОССТАНИ ТĂВАССИНЧЕН ХĂРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат Цюрихран çапла пĕлтерет:

«Хальхи вăхăтра Гиммлер Германи тăрăх çӳрет, вăл ют çĕршыв рабочийĕсем восстани тăвассинчен сыхланма мерăсем йышăнас пирки кăтартусем парса çӳрет. Çак кунсенче вăл Витенберг хулине çитнĕ. Промышленноçлă пысăк центрсенче хурала икĕ хут ӳстернĕ. Эсэсовецсен çăмăллăн куçса çӳрекен отрячĕсене туса хунă, çав отрядсен танксем те пур».

НИМĔÇСЕН ÇУРÇĔР ФИНЛЯНДИРИ ĔÇĔСЕМ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Швецири хаçатсем Финляндирен пыракан хыпарсене пичетлеççĕ. Çав хыпарсенчен нимĕç çарĕсем Финляндин çурçĕр енчи районĕсенче халĕ те хуçаланса пурăнни курăнать. «Стокгольмс Тиднинген» хаçат çапла çырать: «Нимĕçсем пӳлсе тăракан зона тума хатĕрленеççĕ. Çав зона Швеци чиккинчен пуçласа Рованиеми патне, унтан вара Петсамо патне çитмелле. Ăна вĕсем хăйсен Шиботно çывăхĕнчи çуллйĕрĕсене сыхлама тăвасшăн. Çурçĕр Финляндири фронта нимĕçсен çĕнĕ вăйĕсем пырсах тăраççĕ. Нимĕçсен Кăнтăр Норвегири нумай çарĕсене Çурçĕр Финляндие ямашкăн Тромсе районне куçарнă».

ПЕТЭН ТАТА ГИТЛЕРĂН ЫТТИ АГЕНЧĔСЕМ ФРАНЦИРЕН ГЕРМАНИЕ ТАРНИ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви — Германин информаци бюровĕ паян çапла пĕлтерне: Петэн Гитлерăн ытти агенчĕсен ушкăнĕпе пĕрле — Деапа, Дарнанпа, Бриду генералпа, Люшерпа тата ыттисемпе пĕрле Германие тарнă. Германие тарса ӳкнĕ француз квислингĕсем, Гитлер агентстви каланă тăрăх, хăйсене хăйсем «Франци комитечĕ» тесе ят панă. Çав «комитета», Петэн «хушнипе» Гитлерăн Францири паллă агенчĕ де Бринон ертсе пырать.

РУМЫНИ ДИПЛОМАЧĔСЕНЕ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН КАЯЛЛА ЧĔНСЕ ИЛНĔ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Тимпул» хаçат çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: Румынин Бернри посланникне Пелла, Стокгольмри посланникне Нануна, Мадридри посланникне Думитрескуна тата Румынин Мадридпа Стокгольмри дипломатиллĕ миссийĕсен темиçе сотрудникне каялла чĕнсе илнĕ, тенĕ.

ГУАМ ТАТА ТИНИАН УТРАВĔСЕМ ÇИНЧИ ÇАПАÇУСЕМ ÇИНЧЕН

ТОКИО, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви каланă тăрăх, Японин императорĕн ставки çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: Омиядзима (Гуам) тата Тиниан утравĕсем çинче сентябрĕн 27-мĕшĕччен çапăçнă Япони çарĕсем вилсе пĕтнĕ, тенĕ.

СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ЛОНДОНА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Лондона Совет Союзĕнчи профсоюзсен делегацийĕ пырса çитнĕ. Çав делегацие В. В. Кузнецов юлташ ертсе пырать.

КĔСКЕН

- Нимĕçсен 50-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ Фольдхейм генерал-майор Гитлерăн главнăй хваттерне кайнă чухне çул çинче хăйне хăй пĕрĕнсе вилнĕ.
- Нимĕçсем Норвегин Хенефосс хулинче чрезвычайнăй положени туса хунă. Хулана нимĕç çарĕсемпе полицийĕ хупăрласа илнĕ. Унта нимĕçсем Норвеги патриочĕсем 1.700 килограмм динамит вăрланă пирки çапла хăтланнă.
- Мексика столици çинче темиçе сехет хушши асар-писер тăвăл ахăрнă. Мексико хулин хăшпĕр районĕсенче шыв илнĕ. Телефон çыхăнăвĕ пăсăлнă. Хулари транспорт йĕркерен тухнă. Вилнисемпе аманнисем пур. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Районри актив комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Çак кунсенче кунта комсомолăн районри активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВЛКСМ Центральный Комитечĕн бюровĕ комсомолăн Чăваш республикинчи организацийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен йышăннă постановление сӳтсе яврĕ. Çак ыйтупа ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Петрова юлташ доклад туса пачĕ.

Комсомолăн районри организацийĕсем 1943 çулхи июльпе 1944 çулхи сентябрь уйăхĕсем хушшинче 386 çамрăка комсомола илнĕ. Комсомолецсенчен 55 çын ВКП(б) ретне кĕнĕ.

Хăшпĕр пуçламĕш организацисем çамрăксене комсомол ретне явăçтарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Сăмахран, Çирĕккассинчи организаци 1944 çулта 10 çамрăка, Хуракассинчи организаци 9 çамрăка комсомола илнĕ. Çавăн пекех юлашки вăхăтра Туçари, Импӳртри, Чакассинчи, Туппай-Есмĕлти, Кутемерти пуçламĕш организацисем те хăйсен ĕçне лайăхлатнă. Вĕсем час-часах комсомолецсен уçă пухăвĕсене ирттереççĕ, çав пухусене союзра тăман çамрăксене чĕнеççĕ. Çапла вара вĕсене обществăллă ĕçе явăçтараççĕ.

Организаци тĕлĕшĕнчен тĕрекленсе пынă пуçламĕш организацисем ялхуçалăх ĕçĕсене те начар мар хутшăнаççĕ. 489 комсомолец тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçленĕ. Государствăна тырă парас тĕлĕшпе комсомолецсен транспорт бригадисене организациленĕ. Вĕсем хатĕрлев пунктне 343 тонна тырă леçнĕ. Комсомолецсен пуçарăвĕпе 167 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ, кая юлса пыракан колхозсене пулăшу парассине йĕркеленĕ. Вăрнар районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвне йышăнса, колхозсенче вăйлă тырпул звенисем организациленĕ. Шималахри Терентьева юлташ ертсе пыракан вăйлă тырпул звени кăçал гектартан 81 пăт тулă туса илнĕ. Ытти звеносемпе танлаштарсан, вĕсен икĕ хут ытларах тулă тухнă. Çавăн пекех Кутемерти звено та тухăçлă тырпул туса илнĕ.

Анчах комсомолăн районри организацийĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар-ха. ВЛКСМ райкомĕ пуçламĕш организацисене кирлĕ пек ертсе пымасть, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене çийĕнчех палăртмасть, çамрăк кадрсене воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет, кирлĕ пулăшу вăхăтра памасть. Ертсе пырас ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартман пирки тата политикăллă-массăллă ĕçе начар организациленине пула, комсомолăн чылай пуçламĕш организацийĕсем начар ĕçлеççĕ. 1944 çулта пурĕ те 184 çамрăка çеç комсомола илнĕ. 21 организацире вара комсомол йышĕ пачах та ӳсмен. Сахал йышлă организацисем 38 шутланаççĕ, 10 колхозра комсомол организацийĕсем çук. Хăшпĕр комсомол организацийĕсен секретарĕсем ĕçе хăйсем чăрмантарса пыраççĕ. Сăмахран, комсомолăн Кĕнеркассинчи, Чурашри, Шанарти, Чăрăшкассинчи организацийĕсем комсомола кĕме панă заявленисене 2—3 уйăх хушши пăхса тухмасăр выртараççĕ. Чылай пуçламĕш организацисем (Утаçкассинчи, Карабашри, райисполкомри тата ытти çĕрти организацисем) кăçал 8 уйăх хушшинче пĕр пуху та ирттермен. Чылай çĕрте протоколсене кирлĕ пек çырса пымаççĕ. Райкомол пленумĕн членĕсем ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Пуçламĕш организацисем, çавăн пекех ВЛКСМ райкомĕ те йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăмаççĕ. Çавна май чылай решенисем хут çинче çеç юлаççĕ, уйрăм комсомолецсем хушнă ĕçсене пурнăçламаççĕ.

Хăшпĕр пуçламĕш организацисем колхоз пурнăçĕнчен аякра тăраççĕ. Вĕсем колхоз хуçалăхĕпе ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн тăрăшмаççĕ. «Осоавиахим» колхоз районра кая юлса пыракан колхоз шутланать. Кунта ĕç дисциплини япăх, ĕçĕн пахалăхĕ те начар. Анчах комсомолăн колхозри пуçламĕш организацийĕ тата унăн секретарĕ Борисова юлташ çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Уборка ыйтăвĕпе пĕр пуху та ирттермен. Çавăн пекех Чăрăшкассинчи, Шĕнерпуçĕнчи, Чурашри ВЛКСМ организацийĕсен секретарĕсем те колхоза тивĕçлипе пулăшмаççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕнче МТС пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах кунта комсомолец-трактористсем хăйсем те плана тултарса пымаççĕ. Ку вăл трактористсем хушшинче дисциплина начарринчен те чылай килет. Комсомолăн МТС-ри организацийĕ çамрăк трактористсене политикăллă воспитани парас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ «Комсомолăн шкулсенчи ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени чылай çĕрте пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем (Шанар, Уйкас-Кушкă, Утаçкасси, Карабаш, Наратчакки, Ильменкасси) учительсемпе шкул руководителĕсене вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатма çителĕксĕр пулăшаççĕ. Утаçкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта сентябрĕн 20-мĕшĕнче, 75 ачаран 10-шĕ шкула пыман, кунсăр пуçне 5 ача урока кая юлса çитнĕ. Чураш, Покровски, Шанар шкулĕсенче учительсене комсомол пухăвне чĕнмеççĕ. Çапла ĕнтĕ кăçалхи вĕренӳ çулĕнче 34 ача шкул тулашĕнче тăрса юлни те комсомол организацийĕсем начар ĕçлени çинченех калать.

ВЛКСМ райкомĕ çумĕнчи шкул енĕпе ĕçлекен яланлăх комисси шкул ыйтăвĕпе пачах интересленмест.

Пренире тухса каланă юлташсем, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени пĕтĕмпех тĕрĕс пулнине йышăнса, хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклерĕç.

Шанарти çичĕ çул вĕренмелли шкулти старши пионервожатăй Михайлова юлташ ВЛКСМ райкомĕ пуçламĕш организацисен секретарĕсене суйлас, вĕсене вĕрентсе пырас ĕç çине çиелтен пăхнине палăртрĕ.

ВЛКСМ райкомĕн бюро членĕ Зарубина юлташ ВЛКСМ организацийĕсен секретарĕсем ертсе пырас ĕçе тата комсомол хуçалăхне тытмалли йĕркесене пĕлменни çинчен, уйрăм комсомолецсен дисциплини япăххи çинчен чарăнса тăчĕ.

Комсомол активĕн пухăвĕнче ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Алексеев юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл, комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, комсомол ĕçне лайăхлатмалли майсене кăтартса пачĕ.

Актив пухăвĕ, комсомолăн районри организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалли майсене палăртса, тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

«Чăваш Коммуни» издательствине завхоз кирлĕ. Ĕçукçи килĕшсе татăлнă тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Дом печати, III этаж, комн. 28. Телефон 0—23.

2—2

Чăвашсен юрăпа ташă ансамбльне юрлакансем (арçынсемпе хĕрарăмсем), ташлакансем, баянистсем, домбристсем тата тăмра калакансем кирлĕ.

Кĕрес текенсене кунсеренех ирхине 10 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 5 сехетчен итлесе пăхаççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Союзная, 5, Чувашская Госфилармония.

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Шупашкарта Заводски урамра лаша çухалнă. Паллисем çапла: тĕсĕ — чуптар, çамки çинче шурă йĕр пур, ячĕ—«Руслан».

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Цивильский район, Нюршинский сельсовет, правлению колхоза «Красный Октябрь».

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

комсомолецсемпе çамрăксен кинофестивалĕ кунĕсенче

çакăн пек фильмсем кăтартать:

октябрĕн 4-мĕшĕнче

«Ф Р О Н Т»

Октябрĕн 5-мĕшĕпе 6-мĕшĕнче

«С У В О Р О В»

Октябрĕн 7-мĕшĕпе 8-мĕшĕнче

«ПОДВОДНАЯ ЛОДКА Д—9»

Октябрĕн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕнче

«В О И М Я Р О Д И Н Ы»

Кашни сеанс умĕн лекци пулать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Шупашкарти пристане ялан ĕçleme çакăн пек работниксем кирлĕ: счетовод, расчет тăвакан чаçăн бухгалтерĕ, икĕ кассир. Ĕçлекенсене хваттер параççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Пристань Чебоксары, Отдел кадров.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00724 Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 18.000 экз.